27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 АВГУСТ 4 ЭРНЕКУН 152(6647) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

СССР Совнаркомӗнче

1944 ҫулта ялхуҫалӑхӗнчи ҫурхи ӗҫсене туса ирттерес тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине ӳйлатас енӗпе облаҫсем, крайсем, республикӑсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем ҫинчен

1944 ҫулта ялхуҫалӑхӗнчи ҫурхи ӗҫсене туса ирттерес тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине ӳйлатас енӗпе облаҫсем, крайсем, республикӑсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухса, СССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫураки планне тултарассишӗн тата ирттерсе тултарассишӗн выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарас тата ӗрчетес ӗҫре чи лайӑх ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура кӑҫалхи июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне ҫак облаҫсем, крайсем, республикӑсем мала тухнӑ тесе шалӑртнӑ тата ҫапла йышӑннӑ:

ПЫСӐК ТУХӐҪЛА ТЫРПУЛ ТУСА ИЛЕССИШӖН ПЫНА АМАРТУ ЕНӖПЕ

1. Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавӗсене тата укҫан премисене ҫаксене памалла тӑвас:
а) пӗрремӗш преми: Украина ССР-ӗнчи Киев облаҫне, Калинин облаҫне;
б) иккӗмӗш преми: Мускав облаҫне, Курск облаҫне Воронеж облаҫне.
2. Ҫураки туса ирттерес енӗпе Азербайджан ССР-ӗнчи, Грузин ССР-ӗнчи, Кабардин, Ҫурҫӗр Осетин, Дагестан, Чӑваш, Башкир, Коми АССР-ӗсенчи, Украина ССР-ӗн Днепропетровск, Запорожье, Полтава, Сталино, Сумы, Каменец-Подольск, Кировоград, Николаев, Одесса, Харьков, Херсон облаҫӗсенчи, Ленинград, Орел, Грозный, Ярославль, Тула, Горький, Архангельск, Иваново облаҫӗсенчи, Казах ССР-ӗн Караганда тата Павлодар облаҫӗсенчи колхозсемпе МТС-сем лайӑх ӗҫленине палӑртас.

КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ ӖРЧЕТЕССИНЕ ӲЙЛАТАССИШӖН ПЫНА АМАРТУ ЕНӖПЕ

1. Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавӗсене, тата укҫан ҫаксене памалла тӑвас:
а) пӗрремӗш преми: Иваново облаҫне, Азербайджан ССР-не;
б) иккӗмӗш преми: Армян ССР-не, Тула облаҫне, Мускав облаҫне.
2. Колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине ӳйлатас енӗпе Туркмен ССР, Таджик ССР, Грузин ССР, Калинин, Ленинград, Архангельск, Вологда, Челябинск, Чкалов облаҫӗсем, Украина ССР-ӗн Полтава, Киев, Каменец-Подольск, Винница облаҫӗсем, Казах ССР-ӗнчи Гурьев облаҫӗ, Алтай крайӗ лайӑх ӗҫленине палӑртас.

1944 ҫулта ялхуҫалӑхӗнчи ҫурхи ӗҫсене туса ирттерес тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе районсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем ҫинчен

1944 ҫулта ялхуҫалӑхӗнчи ҫурхи ӗҫсене туса ирттерес тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе районсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухса, СССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫураки планне тултарассишӗн тата ирттерсе тултарассишӗн, выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарас тата ӗрчетес ӗҫре чи лайӑх ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура кӑҫалхи июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне ҫак районсем мала тухнӑ тесе палӑртнӑ тата ҫапла йышӑннӑ:

1. ПЫСӐК ТУХӐҪЛА ТЫРПУЛ ТУСА ИЛЕССИШӖН ПЫНА АМАРТУ ЕНӖПЕ

Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавӗсене тата укҫан премисене ҫаксене памалла тӑвас:
Днепропетровск облаҫӗнчи Солонянски районне, Азербайджан ССР-ӗнчи Агдамски районне, Грозный облаҫӗнчи Сунженски районне, Алтай крайӗнчи Локтевски районне, Краснодар крайӗнчи Гулькевичски районне, Горький облаҫӗнчи Богородски районне, Ростов облаҫӗнчи Сальски районне, Акмолинск облаҫӗнчи Акмолинск районне, Новгород облаҫӗнчи Боровичски районне, Воронеж облаҫӗнчи Буденновски районне, Чӑваш АССР-ӗнчи Вӑрнар районне, Грузин ССР-ӗнчи Тетрицкаройски районне, Чкалов облаҫӗнчи Ак-Булак районне, Новосибирск облаҫӗнчи Купински районне, Сталинград облаҫӗнчи Ново-Анненски районне.

2. КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ ӖРЧЕТЕССИНЕ ӲЙЛАТАССИШӖН ПЫНА АМАРТУ ЕНӖПЕ

Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавӗсене тата укҫан премисене ҫаксене памалла тӑвас:
Калинин облаҫӗнчи Калязински районне, Башкир АССР-ӗнчи Учалински районне, Иваново облаҫӗнчи Вичугски районне, Мускав облаҫӗнчи Кунцево районне, Ярославль облаҫӗнчи Ярославль районне, Вологда облаҫӗнчи Пишекснински районне, Челябинск облаҫӗнчи Нагайбакски районне, Азербайджан ССР-ӗнчи Кахски районне, Тула облаҫӗнчи Ленински районне, Саратов облаҫӗнчи Красавски районне, Киргиз ССР-ӗнчи Тогуз-Торовски районне, Армян ССР-ӗнчи Степанакански районне, Грузин ССР-ӗнчи Борчалински районне, Таджик ССР-ӗнчи Ленинабад районне, Киев облаҫӗнчи Переяслав-Хмельницки районне.

СССР орденӗсемпе медалӗсене пани

1944 ҫулхи июлӗн 29-мӗшӗнче СССР Верховный Совет депутачӗ, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ З. А. Андреева юлташ, СССР Верховный Совет Президиумӗ хушнипе, Улатӑрти паровозсем юсакан заводри рабочисен, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксен пухӑвӗнче, чугун ҫул работникӗсен Пӗтӗм Союзри кукӗ ячӗпе пулса иртнӗ пухӑвӗнче, унччен наградӑланӑ юлташсене СССР орденӗсемпе медалӗсене пачӗ.

Правительство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн «Хисеп палли» орденне Улатӑрти паровозсем юсакан заводӑн начальникӗ Николай Сильвестрович **Крупский** тата РСФСР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн Улатӑрти завочӗсен директорӗ Неофит Михайлович **Арбузов** юлташсем; «Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медальсем Улатӑрти паровозсем юсакан заводри цех начальникӗ Алексей Константинович **Кабалевский** тата ҫав заводри токарь Сергей Степанович **Объедкин** юлташсем; «Ӗҫре палӑрнӑшӑн» медальсем Улатӑрти паровозсем юсакан заводри токарь Дмитрий Петрович **Артюшинпа** цехри мастер Василий Германович **Фаль** юлташсем илеҫҫӗ.

Наградӑланисем, наградӑсене илсе, хӑйсен ӗҫне пысӑккӑн хакланӑшӑн партипе правительствӑна хӗрӳллӗн тав турӗҫ, малашне татах та лайӑхрах ӗҫлеме пулчӗҫ.

Улатӑрти паровозсем юсакан завод начальникӗ **Н. С. Крупский** юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксене малашне лайӑхрах ӗҫлеме, ҫапла вара правительство заданине ирттерсе тултарса, нимӗҫ фашисчӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара пур майсемпе те пулӑшма чӗнчӗ.

Юлашкинчен СССР Верховный Совет депутачӗ, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ Андреева юлташ награда илнӗ юлташсене правительствӑн пысӑк наградине илнӗ ятпа саламларӗ, малашнехи ӗҫре татах та пысӑкрах ӳсӗмсем тума ырӑ сунчӗ.

Пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫар праҫникӗ

ҪАПАҪУРИ ҪАР, августӑн 1-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Совет Союзӗн Маршалне Сталин юлташа «Ҫӗнтерӳ» орденӗпе наградӑлани ҫинчен калакан хыпара Украинӑри 1-мӗш фронтӑн ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пыракан ҫарӗсен соединенийӗсемпе чаҫӗсенче ҫав тери хавасланса кӗтсе илнӗ. Ҫапаҫури лару-тӑру май панӑ вырӑнсенче пур ҫӗрте те митингсемпе калаҫусем пулса иртнӗ.

— Сталин юлташа «Ҫӗнтерӳ» орденӗпе наградӑлани пире питӗ савӑнтарса хавхалантарать. Эпир хамӑр Хӗрлӗ Ҫаршӑн, совет халӑхӗшӗн, хамӑр Тӑван ҫӗршывшӑн мухтанса хӗпӗртетпӗр. Ҫав наградӑна парса, пирӗн Тӑван ҫӗршыв ҫав тери тӗрӗс стратегин чаплӑ ҫӗнтерӗвне паллӑ тӑвать, хӑйӗн ҫулпуҫне тата полководецне юратса тав тунине кӑтартса парать. Верховный Главнокомандующине наградӑланӑ кун пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫарӑн, салтакран пуҫласа генерала ҫитиччен, чаплӑ праҫникӗ пулса тӑрать, — тенӗ пӗр митингра гварди капитанӗ Лимонов.

Черниговски стрелковӑй дивизири мӗнпур боецсемпе офицерсен шухӑшне палӑртса, Глуховцев ефрейтор ҫапла каланӑ:

— Пирӗн халӑх, малта пыракан пӗтӗм этемлӗх пирӗн полководеца, пирӗн ҫӗнгерӳсен организаторне Сталин юлташа ӗмӗрсем хушши мухтаса тӑрӗ. Аҫта Сталин — унта ҫӗнтерӳ. Сталин пирӗнпе — тӑшмана тӗппипех ҫӗнтересси те пирӗнпе!

Г. ОЩАРОВСКИЙ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 1-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 1-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПСКОВ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, ҫаплах малалла танӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — БОРОВЕНКИ, ШЕЛЕХОВА, ВЕЯС, ЯУНАННА ятлӑ пысӑк ялсем тата ЛЫТЕНЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

ДАУГАВПИЛС (Двинск) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем наступление ҫаплах ӳйлатса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — ЛИВАНИ хули, ДИГНАЯ, СЛОТАС, РУБЕНЕ, АСАРЕ, ГАРСЕНЕ, ДИДСОДЕ, РОКИШКИС, ЖИОБИШКИС, ПАНДЕЛИС ятлӑ пысӑк ялсем тата ДИГНАЯ, РОКИШКИС, ГИНДЖУЛЯЙ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ИЕЛГАВА (Митава) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Литва ССР-ӗн уезд центрне ТУКУМС хулипе чугун ҫул станцине, ДОБЕЛЕ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — КЛАПКАЛНС, ДЖУКСТЕ БЕРЕМУЙЖА ялӗсем тата ПРАВИНУ, СЛАМПЕ, ДЖУКСТЕ, БУДАС, ЛИВБЕРЗЕ, БРАКШТИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Ҫапла ӗнтӗ пирӗн ҫарсем БАЛТИКА ТӐРАХӖНЧЕН ХӖВЕЛТУХӐҪ ПРУССИЕ каякан пур ҫулсене те татнӑ.

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшман ӳйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, КАУНАС (Ковно) хулипе крепоҫне — ҫулсен вӑрҫӑ тӗлӗшпе паха вырӑн йышӑнса тӑракан узелне тата нимӗҫсен оборонин хӑватлӑ тӗреклетнӗ пунктне штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 300 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ГАНУСЕВИЧИ, ВЕНДЗЯГОЛА, АНТОГИНИ, БОБТЫ, РИНГВАЛЬДЫШКИ, АЗЕРЕС, ЮРА, БОГАТА, ДЫДВИЖЕ, ГИЖЕ, СУСНИКИ, ВИДЗГАЙЛЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата ОЛЬКСНЯНЫ, МАЖУЦЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

БЕЛЬСК хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла танӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — халӑх пурӑнакан ПЯТКОВО, ТОПЧЕВО, ГЛИННИКИ, БРЯНСК, РУДКА, ЛЕМПИЦА, СТАДНИКИ, ДРОГИЧИН ятлӑ пысӑк пунктсем.

СЕДЛЕЦ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем КАЛУШИН хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — халӑх пурӑнакан НИВСКА, ЗЕМАКИ ЧАРНОВОНЖ, СЕННА, СЛУХОЦИН, ГРОШИКИ ятлӑ пысӑк пунктсем тата КОШЕВНИЦА, МРОЗЫ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем нимӗҫсен ҫӗмӗрсе тӑкнӑ 73-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирне ФРАНЕК генерал-лейтенанта унӑн штабӗпе пӗрлех тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 31-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 37 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 28 самолетне персе ӳкернӗ.

АВГУСТӐН 2-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 2-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем РЕЗЕКНЕ (Режица) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла танӑнса пынӑ, ВАРАКЛАНИ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — САРНИ, ГРОЗИ, ЛЕЙМАНИ, ТИЛТАГАЛС, СТЕТИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ТИЛТАГАЛС чугун ҫул станцийӗ.

КАУНАС (Ковно) хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ, Литва ССР-ӗн уезд центрне КЕДАЙНЯЙ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ЯКУБАЙЦЫ, КРОКИ, ДАТНОВО, ДУБЫ, ЯСВОЙНИ, ЗАСТРЕБЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата ДАТНОВО чугун ҫул станцийӗ.

МАРИАМПОЛЬ хулинчен ҫурҫӗр хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, ВИЛКАВИШКИС (Волковышки) хулине, КАЛВАРИЯ хулине тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ДЫДВИЖЕ, БОЛЬШИЕ ШЕЛЬВЫ, ЯХОВКА, СЛОБОДКА, БУДВЕЦЕ, ВИДУГЕРЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата ВИЛКАВИШКИС, КАЛВАРИЯ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

СЕДЛЕЦ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — ЦЕХАНОВЕЦ хулине, ВОЙТКОВИЦЕ, ГРАННОЕ, ГРУДЕК, КАМЕНКА, СКШЕШЕВ, РЕПКИ, ВОРОЖЕМБЫ, ПАПРОТНЯ, КРЫНИЦА, СУХОШАБРЫ, МРОЧКИ, ЖОНДЗА, ЛАЗИСКА, ЧАРНА ятлӑ пысӑк ялсем.

ЯРОСЛАВ хулинчен хевеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, ЖЕШУВ хулипе чугун ҫул узелне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — РОЗАЛИН, МАЙДАН, КОЛЬБУШОВА, ГЛОГУВ, МРОВЛЯ, ДОЛЬНА, БОГУХВАЛА, ЧУДЕЦ, СТШИЖУВ ятлӑ пысӑк ялсем тата БОГУХВАЛА, БАВИЦА, ЧУДЕЦ, СТШИЖУВ чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Августӑн 1-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 53 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 76 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Резекне (Режица) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тӑшман, оборона тума шурлӑхлӑ лайӑх вырӑнпа усӑ курса, хытӑ хирӗҫ тӑрать. Нимӗҫсем ҫулсем хӗресленнӗ вырӑнсенче окопсем чавса ларнӑ та пур ҫӳллӗ вырӑнсенчен те оборонӑн тӗреклетнӗ хӑватлӑ пункчӗсем туса хунӑ. Пирӗн ҫарсем пӗчӗк ушкӑнсемпе тӑшман тылне кӗре-кӗре каяҫҫӗ, унӑн хирӗҫ тӑмалли узелӗсене ҫавӑра-ҫавӑра илсе пӗтерсе пыраҫҫӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем, Вараклани хулипе ҫулсен узелне аякран кайса ҫавӑрса илнӗ те, ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа туртса илнӗ. Ҫавӑн пекех тата Тилтагалс чугун ҫул станцине йышӑннӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче 800 нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Каунас (Ковно) хулинчен ҫурҫӗртерехре тӑшман юлашки кунсенче ӳйлӑ контратакӑсем тунӑ. Нимӗҫсем пирӗн ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ еннелле наступлени туса пыракан ҫарсене пырса ҫапма шутланӑ. Хаяр ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем тӑшмана халран янӑ та, гитлеровецсене хӑйсене хӑватлӑн пырса ҫапнӑ. Нимӗҫсен хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, совет чаҫӗсем Невяжа шывӗ урлӑ каҫнӑ та, темиҫе енчен ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, шоссе ҫулӗсен пысӑк узелне Кедайняй хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Пирӗн ҫарсем Вильнюс хулипе Шауляй хули хушшинчи чугун ҫула фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех тасатнӑ. Тӑшманӑн, пӗр вилнисене кӑна шутласан та, 2.000 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтнӗ. 38 тупӑ, 12 миномет, 90 пулемет тата 100 автомашинӑпа лав пӗтерсе тӑкнӑ. 29 тупӑ, хӗҫпӑшалпа боеприпассен 11 складне тата 340 чугун ҫул вагонне туртса илнӗ. 200 нимӗҫе тытла тыткӑна илнӗ.

Мариамполь хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, наступление ӳйлатса пырса, Вилкавишкис (Волковышки) хулине туртса илнӗ. Ку хула пирӗнпе Германи хушшинчи государство чиккинчен 18 километрта ларать. Тӑшман совет ҫарӗсен наступленине пур майсемпе те чарса лартма хӑтланать. Вӑл халь ҫеҫ Германин вӑтам районӗсенчен килсе ҫитнӗ пӗр артиллери дивизине, пӗр танковӑй дивизие тата икӗ пехотнӑй дивизие ҫапӑҫа кӗртсе янӑ. Аста маневрсем туса, пирӗн танковӑй тата пехота чаҫӗсем тӑшмана кӗтмен ҫӗртен аркатмаллах пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Нимӗҫсем чылай вырӑнсенче каялла чакнӑ чухне чугун ҫул тата шоссе ҫулӗсен кӗперӗсене те сирпӗнтерме ӗлкӗреймен. Нумай ҫулсем ҫинче гитлеровецсем пӑрахса хӑварнӑ юсавлӑ автомашинӑсемпе тупӑсем купаланса выртаҫҫӗ. Пӗр районра совет танкисчӗсем нимӗҫсен фронталла пыракан ҫар эшелонне аркатса тӑкнӑ. Тепӗр участокра нимӗҫсен маршевӑй батальонне хӑй вырӑнне ҫитиччен пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем кункаҫичченхи ҫапӑҫусенче 2.500 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. 17 танк персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, 110 автомашинӑна тата ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан 200 лава ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Мариамполь хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем хытӑ хирӗҫ тӑракан тӑшмана малалла хӗстерсе пынӑ. Кунти хаяр ҫапӑҫусенче час-часах алӑ вӗҫҫӗн тытӑҫа-тытӑҫа илме лекнӗ, ҫавӑн хыҫҫӑн вара совет чаҫӗсем Калвария хулине тытса илнӗ. Нимӗҫсен 131-мӗш пехотнӑй дивизине йывӑр поражени кӳнӗ. Ҫав дивизин 432-мӗш полкне пуҫӗпех пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ, тыткӑна нумай илнӗ.

Пирӗн авиаци тип ҫӗр ҫинчи ҫарсене тӑшманпа ҫапӑҫма активлӑн пулӑшса тӑнӑ. Кун каҫиччен сывлӑшри ҫапӑҫусенче совет летчикӗсем нимӗҫсен 29 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Ярослав хулинчен хӗвеланӑҫнерехре темиҫе кун хушши хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Нимӗҫсем хӑйсен пехотин пысӑк вӑйӗсене тата танкӗсемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туписене контратакӑсене нумай кӗрте-кӗрте янӑ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, пирӗн ҫарсем Жешув хулинчен кӑнтӑртарахра тата ҫурҫӗртерехре Вислок шывӗ урлӑ каҫнӑ та тӑшман гарнизонне икӗ енчен хӗсе лартнӑ. Советсен ытти чаҫӗсем, тӑшмана фронтран пырса ҫапса, хулана вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Паян нимӗҫсен хулари гарнизонне пӗтӗмӗшпех аркатса тӑкнӑ. Чугун ҫулсен тата шоссе ҫулӗсен узелӗ пулса тӑракан Жешув хулине тӑшманран тасатнӑ. Ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен нимӗҫсене йывӑр ҫухатусем кӳнӗ. Тӑшманӑн 43 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. 400 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

* * *

Пирӗн авиаци Рига чугун ҫул узелӗн ҫулӗсем ҫинче нумай капланса тулнӑ нимӗҫсен ҫар эшелонӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем тӳрех пырса тивнине пула, тӑшманӑн 6 эшелонӗ ҫӗмӗрӗлнӗ. Бомбӑсем пӑрахнипе пушарсем тухнӑ. Тӑшманӑн техникӑпа ҫар пурлӑхӗ тиенӗ вагонӗсемпе платформисем ҫуннӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Нарва заливӗнче тата Чудь кӳллинче тӑшманӑн карапӗсене бомбӑсем пӑрахса штурмласа ҫапнӑ. Хуралта ҫӳрекен икӗ карапа, виҫӗ тральщике, хуралта ҫӳрекен икӗ катера, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен виҫӗ десант баржине тата икӗ катера шыва путарнӑ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑваш АССР-ӗнчи уйрӑмах палӑрнӑ учительсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

(Малалли. Пуҫламӗшӗ «Чӑваш Коммунин» 150-мӗшпе 151-мӗш номерӗсенче).

61. Анастасия Васильевна **Изосимовӑна** — Тӑвай районӗнчи Йӑнтӑрчри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул директорне.
62. Анна Петровна **Иливановӑна** — Куславкка районӗнчи Елчӗк вӑтам шкулӗн учительницине.
63. Нина Яковлевна **Ильинана** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Чӑрӑш-Сӗнтӗрти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн учительницине.
64. Анастасия Антоновна **Кирилловӑна** — Шупашкар хулинчи ҫутӗҫ пайӗн заведующине.
65. Мария Андреевна **Колесниковӑна** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Чӑрӑшкасси пуҫламӗш шкулӗн заведующине.
66. Юлия Антоновна **Коноваловӑна** — Комсомольски райҫутӗҫ пайӗн заведующине.
67. Лидия Григорьевна **Красновӑна** — Улатӑр районӗнчи Стемасри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн вӗренӳ пайӗн заведующине.
68. Георгий Афанасьевич **Кривошеева** — Комсомольски районри Хырхӗррипчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул директорне.
69. Екатерина Николаевна **Крыловӑна** — Улатӑр районӗнчи Елушевӑри пуҫламӗш шкулӑн учительницине.
70. Григорий Александрович **Крынецкие** — Вӑрнар вӑтам шкулӗн учительне.
71. Зинаида Ивановна **Кузьминана** — Етӗрне районӗнчи Етӗрне салинчи вӑтам шкулӑн учительницине.
72. Матрена Ивановна **Кузьминана** — Первомайски ялӗнчи вӑтам шкулӑн учительницине.
73. Нина Ефимовна **Куликовӑна** — Улатӑр райҫутӗҫ пайӗн заведующине.
74. Екатерина Яковлевна **Кутаркинӑна** — Комсомольски ялӗнчи вӑтам шкулӑн учительницине.
75. Василий Леонтьевич **Леонтьева** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Макаҫри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн директорне.
76. Михаил Никифорович **Локотникова** — НКВД-ӑн Шупашкарти ачасен ӗҫ колонийӗ ҫумӗнчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн учительне.
77. Ольга Александровна **Лукиновӑна** — Канашри 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн учительницине.
78. Ольга Евгеньевна **Лунинӑна** — Сӗнтӗрвӑрри вӑтам шкулӗн учительницине.
79. Раиса Вениаминовна **Ляшкона** — Шупашкарти арҫын ачасен 4-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗн учительницине.
80. Михаил Петрович **Макарова** — Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарне.
81. Валентина Матвеевна **Мартьяновӑна** — Сӗнтӗрвӑрринчи ача ҫурчӗн вӗрентӳпе воспитани пайӗн заведующине.
82. Андрей Павлович **Марховские** — Улатӑрти 9-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн учительне.
83. Фият Займутдинович **Маскова** — Комсомольски районри Чурачӑк вӑтам шкулӗнчи ҫар ӗҫне вӗрентекене.
84. Мария Ивановна **Матвеевӑна** — Канашри 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн учительницине.
85. Галина Клементьевна **Матюковӑна** — Сӗнтӗр районӗнчи Мӑн Сӗнтӗр вӑтам шкулӗн учительницине.

(Малалли пулать).

ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КӖРТЕС ТЕЛЕШПЕ РЕСПУБЛИКАРИ РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧИ СОЦИАЛИЗМЛА АМАРТУ АВГУСТАН 1-МЕШЕ ТЕЛНЕ МЕНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Миҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑ
Чурачӑк	1
Калинино	2
Елчӗк	3
Чкаловски	4
Комсомольски	5
Шӑхасан	6
Вӑрмар	7
Красноармейски	8
Вӑрнар	9
Октябрьски	10
Советски	11
Тӑвай	12
Пӑрачкав	13
Ҫӗрпӳ	14
Етӗрне	15
Куславкка	16
Канаш	17
Йӗпреҫ	18
Хӗрлӗ Чутай	19
Кувакино	20
Ҫӗмӗрле	21
Сӗнтӗрвӑрри	22
Шӑмӑршӑ	23
Шупашкар	24
Первомайски	25
Муркаш	26
Сӗнтӗр	27
Ишлей	28
Улатӑр	29
Элӗк	30

Виҫӗ кун ҫурӑра ыраш вырса пӗтерне

Вӑрмар районӗнчи «Красный Мурат» колхоз 3 кун ҫурӑра ыраш вырса пӗтернӗ. Ҫак ҫитӗнӗве уйрӑм сдельщинӑпа тата пӗчӗк ушкӑнсемпе ӗҫлесе тунӑ. Кашни пысӑк мар ушкӑна каҫранах ҫӗр уйӑрса параҫҫӗ. Ҫав участок ҫинче ирхине хӗвел тухиччченех хӗрӳ ӗҫ пуҫланать, кашни ҫын ӑмӑртса ӗҫлет. Кулленхи ӗҫ нормине тултарман пӗр колхозник те ҫук. Колхозниксене куллен икӗ хутчен пӗрлешӳллӗ столовӑйра апат ҫитереҫҫӗ.

Халӗ кунта авӑн ҫапас, ҫуртыррисем вырас тата государствӑна обязательство тӑрӑх тырӑ парас ӗҫ пырать.

Г. ТИМОФЕЕВ.

Тырӑ вырас ӗҫ юлса пырать, анчах машинӑсемпе усӑ курмаҫҫӗ

ЭЛӖК, августӑн 3-мӗшӗ. (Телефонпа). СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн тырӑ вырас ӗҫ чылай колхозсенче хӑвӑртланчӗ. Сталин ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Ястран юлташ) ыран ыраш вырса пӗтерет. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ лайӑх пулни кунта пӗтӗмпех уйрӑм сдельщинӑпа ӗҫленинчен килет. Уйрӑм колхозницӑсем нормӑна икшер хут ытла тултараҫҫӗ. Ф. Львова тата А. Ефимова юлташсем кашни кунах нормӑна 220—250 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ. «Доброволец», «Труд» колхозсенче те ӗҫ ӑнӑҫлӑ пырать, вӗсем те паян-ыран ыраш вырса пӗтереҫҫӗ.

Анчах та, пӗтӗм районӗпе илсен, ыраш вырас ӗҫ начар хӑвӑртлӑхпа пырать. Пӗтӗмпе 1500 гектара яхӑн ыраш вырнӑ, машинӑсемпе пурӗ те 90 гектар ҫеҫ вырнӑ. Районра 101 жнейка пур, вӗсенчен 58-шне юсаман, ыраш вырас ӗҫре пурӗ те 17 жнейкӑпа ҫеҫ усӑ кураҫҫӗ. Кӗреплеллӗ ҫавасемпе пӗр колхозра та ҫулмаҫҫӗ. Районра план тӑрӑх кӗреплеллӗ ҫавасем 800 ытла пулмалла, паянхи куна пурӗ те 75 ҫава ҫеҫ хатӗрленӗ. Чӑваш Сурӑм ялсоветне кӗрекен 5 колхозра 9 жнейка пур, вӗсемпе пӗринпе те вырмаҫҫӗ. «Серп и молот» колхозра 2 жнейка, анчах вӗсем юсавсӑр.

«Трактор» колхозра 2 жнейка пур, вӗсене юсаман, ҫурласене те 50 процент кӑна шӑллатнӑ. Кунта ыраш вырма июлӗн 29-мӗшӗнче тухнӑ, анчах ҫак куна ҫитсе те 4 гектар кӑна вырнӑ.

Тырӑ вырас ӗҫе ҫакӑн пек тӑсса пырсан, вӑл нумай тӑкӑнса пӗтме пултарать. Районра ыраш вырас тата ҫапас ӗҫе хӑвӑртлатас тӗлӗшпе халех тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла.

Х. ЛИСИН.

Кировецсем ыраш выраҫҫӗ

МУРКАШ. Киров ячӗпе тӑракан колхоз кӑҫал тырпулсене пухса кӗме вӑхӑтра хатӗрленчӗ. 2 жнейка, 2 молотилка, сеялка, сортировка тата ҫавасемпе ҫурласем ҫителӗклӗ хатӗрлесе хучӗ. Жнейкӑсемпе тулӑин усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсен ҫумне зерноуловительсем туса лартнӑ. Вырнӑ хыҫҫӑн пучахсене пуҫтарма шкул ачисенчен уйрӑм отряд тунӑ, вӑл отряда Герман Петровпа Виктор Петров пионерсем ертсе пыраҫҫӗ. Тырӑ хывмалли амбарсемпе складсене тасатса дезинфекциленӗ.

Вӑрлӑх участокӗсем ҫинчи тырӑсене ятарласа тунӑ звено пухать, унтан пухса илнӗ тырра уйрӑм складсене хываҫҫӗ.

Государствӑна вӑхӑтра тырӑ парса татас шутпа, тырра «Заготзерно» склачӗсене леҫме транспортнӑй бригада тунӑ.

Колхоз ыраш вырас пӗтӗм ӗҫе уйрӑм сдельщинӑпа организациленӗ. Анса пулнӑ тырра сыхлама 3 хуралҫӑ уйӑрнӑ, вӗсем тырра кунӗн-ҫӗрӗн сыхлаҫҫӗ.

Колхозра 2 бригада, кашни бригадӑрах 2 звено. Вӗсем пӗр пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Стахановецсен лайӑх ӗҫӗсене ҫырса пыма кашни бригадӑрах Хисеп хӑми организациленӗ. Кашни бригадӑрах «Боевой листок» кӑларма редактор уйӑрнӑ тата 2 вулавҫӑ ӗҫлеҫҫӗ.

Колхозра пӗрлешӳллӗ столовӑй пур, унта куна икӗ хут ҫитереҫҫӗ.

Я. НИКИФОРОВ.

Тырпул пухса кěртес ěçе пěтěм вăя хурар

Пирěн республикăри колхозсем кăçал хăйсен уйхирěсенче вăйлă тырпул çитěнтерчěç. Кěрхи тырăсем пур çěрте те пиçсе çитрěç, халě вырса пухас ěç массăллăн пуçланчě. Колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем иртнě кěркунне тата кăçал ывăхма пěлмесěр ěçлени ахаль пулмарě, вěсен ěçě пысăк тухăçлă тырпул туса илме май пачě.

Тăваттăмěш çул ěнтě пирěн çěршыври колхозсем тырпулсене пухса кěртес ěçе вăрçă вăхăтěнчи йывăр условисенче туса ирттереççě. Вăрçăччен те ку ěç ялхуçалăхěнчи чи йывăр та ответлă ěçсен шутěнче пулнă. Мěншěн тесен, тырпулсене пухса кěртес ěç ытти ěçсемпе—государствăна тырă парассипе, кěрхи тырăсем акассипе, кěрхи çěртме тăвассипе тата выльăх-чěрлěхсене хěл каçарма хатěрленессипе пěр вăхăта пулса пырать.

СССР Совнаркомěпе ВКП(б) Центральный Комитечě «1944 çулта тырпул пухса кěртесси тата ялхуçалăх продукчěсене хатěрлесси çинчен» йышăннă постановленире мěнле ěçлемеллине уççăн кăтартса пачěç. Çěрěç органěсен, ялхуçалăх специалисчěсен, колхоз председателěсен çав постановление кашни колхозникпе колхозницăна, трактористпа трактористкăна, комбайнерсене, ялхуçалăхěнчи ытти мěнпур работниксене тěплěн ăнлантарса парса, вěсене тырпула ăнăçлăн пухса кěртес ěçе мобилизацилемелле.

Иртнě çулхи опыт çакна кăтартса парать: уборкăна лайăх хатěрленнě район е колхоз тырпулсене ăнăçлăн пухса кěртме пултарать.

Июлěн 20-мěшě тěлне пирěн республикăри 25 район — çěртме туса, 28 район улăх утисене çулса пěтерně. 2.630 жнейкăпа лобогрейкăна, лашапа ěçлекен 1.300 яхăн молотилкăна, 250 комбайна тата тракторпа ěçлекен 243 сложнăй молотилкăна юсаса хатěрленě. Çав машинăсемпе пěлсе тата туллин усă курсан, çавасемпе тата çурласемпе пикенерех ěçлесен тырпулсене вăхăтра тата ăнăçлăн пухса кěртме пулать.

Çакна палăртмасăр хăварма юрамасть: Улатăр, Чкаловски, Хěрлě Чутай районěсен руководителěсем иртнě çулхи йăнăшсене татах манса кайнă. Иртнě çул вěсем тырă вырма тухиччен çěртме туса тата утă çулса пěтермен пирки, тырпул пухса кěртес ěçе вăраха тăсрěç, тăкаксем турěç, кěрхи тырăсене ытла та кая юлса акрěç. Çавна пула тырă та вěсен начартарах пулчě.

Алăпа вырасси çине ытларах шанса, Йěпреç, Куславкка, Октябрьски тата Советски районсем жнейкăсемпе лобогрейкăсене вăхăтра юсаймарěç. Çапла вěсем тырă вырма тухиччен машинăсене 50 процента яхăн юсаса хатěрлемен. Улатăр МТС-ěн директорě Училихин, Канаш МТС-ěн директорě Зайцев, Пăрачкав МТС-ěн директорě Салмин тата Етěрне МТС-ěн директорě Перлович юлташсем машинăсене юсас ěçе начар организацилемине пула, комбайнсене срокра юсаса пěтереймерěç, çавăнпа та нумай машинăсем халě те ěçе тухма хатěр мар. Асăннă районсен руководителěсем çак çитменлěхсене халех пěтерме тивěçлě.

Иртнě çул уйрăм колхозсем тырă типěтмелли сушилкăсем çуккипе пысăк тăкак тÿсрěç. Тырра типěтме колхозниксене валеçсе пачěç, ку вара ěçе чылай йывăрлатрě, пысăк çухатусем патне илсе пычě. Ахальтен мар ěнтě СССР Совнаркомěпе ВКП(б) Центральный Комитечě «Тырпул пухса кěртесси тата ялхуçалăх продукчěсене хатěрлесси çинчен» йышăннă постановленире çак ыйту пирки уйрăмах çивěч кăтарту пачěç.

Нумай колхозсем кăçал тырпул пухса кěртес тěлěшпе ěç планěсем вăхăтра тата тěплěн шутласа турěç. Çакă вăл машинăсемпе тěрěс усă курма, ěç вăйне кирлě пек вырнаçтарма май парать, хăш ěçе хăçан тата мěнле тумаллине кăтартса парать. Пуриншěн те паллă: план темěн тěрлě лайăх пулсан та, унпа ěç вěçленмест-ха. Хут çинче питě лайăх план тума пулать, анчах колхоз председателě план мěнле пурнăça кěрсе пынине контроллесе тăмасан, ěçе организацилеме пěлмесен, е оперативность çитсěлěксěр пулсан, ěçре дисциплина пулмасан, çынсемпе машинăсене кирлě пек вырнаçтарса тухмасан, планăн усси нимěн чухлě те пулмě.

Уборкăн малтанхи кунěсем ěçе организацилес енěпе колхозсенче пысăк çитменлěхсем пуррине кăтартса параççě. Уйрăм стельщинăпа е пěчěк ушкăнсемпе ěçлени чи лайăх форма пулса тăрать. Çакă вăл ěç [illegible] участокри тырра хăçан вырса пěтермелли, кěлте çыхмалли, вěсене çěмеле хывмалли, тăкăнса юлнă пучахсене пухмалли тата ытти ěçсене туса пěтермелли срокěсене кăтартаççě. Çакăн пек ěçлени ăнăçлă пулнине пур çěрте те пěлеççě, анчах та Чкаловски районри колхозсенче çап-

...нех 20—30-шар çынлă ушкăнсемпе ěçлеççě. Чкаловски районри çěрěç пайěпе МТС руководителěсем хăйсен районě 1943 çулта тырпулсене пухса кěртес ěçре кая юлса пыни ěçе организацилеме пěлменнинчен килнине манса кайнă. Иртнě çулхи йăнăшсене кăçал тумалла мар, ěçе организацилесси çине тимлěн çавăрăнса пăхмалла.

Ěç кунěпе туллин усă курмалла. Ирхине ирех ěçе тухса, тěттěм пуличченех ěçлемелле тăвас пулать. Елчěк районěнчи чылай колхозсенче хирти станსем тунă, колхозниксем хиртех апатланаççě, унтах çываççě. Çапла вара вěсем хиртен яла çаврăнса тата хире кайса вăхăта ирттермеççě. Тÿрех калас пулать, Елчěк районěнче кăçал, ытти районсемпе танлаштарсан, тырпул пухса кěртес ěç ăнăçларах пырать.

Тырпул пухса кěртес ěçе ěçлеме пултаракан мěнпур колхозниксене явăçтармалла. Уйра ěçлекен кашни колхозник ěç нормине тултарса пытăр. Кашни колхозник хăй мěн чухлě ěçленине тата мěн чухлě ěçкунě тунине куллěнех пěлсе тăтăр. Малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсен ěçне ытти колхозниксене анлăн кăтартса парас пулать.

Ěç ăнăçлă пытăр тесен, ача амăшěсене ěçе анлăн явăçтармалла, çавăнпа та кашни колхозрах ача ясли е площадки тумалла. Ачасене пăхма шанчăклă çынсене уйăрмалла, тырă вырнă çěрте ача амăшě пěр шухăшламасăр, канлěн ěçлеме пултартăр.

Тырă вырнă, авăн çапнă çěрте тăкаксемпе кěрешессине малтанхи кунран пуçласах организацилемелле. Тăкаксемпе кěрешесси пучахсене пухнипе тата зерноуловительсем тунипех вěçленмест. Тăкаксем ан пулччăр тесен, тырпулсене хăвăртрах, вырса пухас пулать. Вырнă тырра çийěнчех çыхмалла, каçхине кěлте йăтса çěмелсемпе купасем тумалла, вăхăтра капана хывмалла. Капан тăвасси питех те ответлă ěç, çавăнпа та çак ěçе опытлă колхозниксене хушмалла. Капана шыв ан кайтăр тесен, çиелтен çапнă улăмпа витмелле. Кашни кунах каçхине, ěç пěтнě хыççăн, капан умěнче тăкăннă тěштырра пухса илмелле, колхоз завхозěн аллине памалла.

Тырă вырмалли кашни машина — жнейка, лобогрейка, комбайн çумěнче зерноуловительсем пулмалла. Вырса пěтернě хыççăн пучах пухмалла; колхозниксемпе колхозницăсен тăкăнса юлнă пучахсене пухма кěреплесем илсе çÿремелле.

Авăн çапассине тăсма юрамасть, вырма пуçланă хыççăн 5-мěш кунěнче авăн çапма тытăнас пулать. Тăкаксем ан пулччăр тесен, колхоз председателěн бригадирсенчен тунă ěçе кашни кунах йышăнса тăмалла, бригадирсен вара — звеносенчен йышăнмалла. Кашни колхозрах пахалăх инспекторěсем ěçлемелле, вěсен тырпул пухас тата авăн çапас ěçěн пахалăхне сăнаса тăмалла.

Иртнě çул уйрăм колхозсенче çапнă тырра шута илесси çине кирлě пек çавăрăнса пăхман. Комбайнпа çапнă тырра е итемри тырра час-часах виçмесěрех амбарсене кěртнě. Кăçал ун пек тума юрамасть. Комбайнпа çапнă тырра е итемри тырăсене виçсе, накладнойсем çырса амбара ăсатас пулать. Накладной çине амбара мěн чухлě тырă янине тата лавăçăн хушаматне çырса хумалла. Çакăн пек тусан çеç тырпула салатса, вăрласа пěтерессинчен сыхлама пулать.

СССР Совнаркомěпе ВКП(б) Центральный Комитечě нумай çул хушши ÿсекен курăксен вăрлăхěсене пухса кěртесси çине уйрăмăнах тимлěн çаврăнса пăхма кирлине кăтартса пачěç. Халě клевер шěкěлчемелли машинăсене юсамалла, лашапа ěçлемелли молотилкăсене курăк вăррине шěкěлчемелле туса хатěрлемелле. Вăрлăхлăх хăварнă курăксене пулса çитнě хыççăн ана çинче нумайччен лартмалла мар, вěсене çапассине те тăсма юрамасть.

Çěрěç органěсемпе колхоз руководителěсен, агрономсен вăрлăх участокěсем çинчи тырпула пухса кěртессишěн тимлěн тăрăшмалла. Халě вăрлăх участокěсене вырăнта палăртса хумалла, унти тырпула вăхăтра пухса илсе çапассине организацилемелле. Вăрлăх участокěсем çинчен пухса илнě тырра уйрăмăн çапмалла, уйрăм хумалла тата акт çырса кладовщик аллине памалла. Çав акт çине мěн чухлě тырă панине, вăрлăхăн пахалăхне, мěнле сортлине кăтартса çырмалла. Çакна хыгтăн асра тытас пулать: вăрлăх фондне çителěклě таран хывиччен вăрлăх участокěнчен [illegible] пыни тырпулсене вăхăтра пухса кěртме, государствăна обязательствăсем тăрăх ялхуçалăх продукчěсем вăхăтра парса татма май парать.

Н. МАЛОВ,
Чăваш АССР Çěрěç Халăх Комиссарě.

Ÿкерчěкре: Ишлей районěнчи «Ырăш» колхозри старши конюх И. Г. Дашков юлташ [illegible]. Старши конюх пěлтěр 6 çул ěçлет. [illegible]
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчěкě.

Пěр пек профессипе ěçлекенсен ăмăртăвě

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ěçлекен заводри инструментальщик-фрезеровщик Королев юлташ заводри хаçат урлă мěнпур рабочисене пěр пек профессипе ěçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту пуçарма чěнсе каланă пулнă. Çав паха пуçару кунран-кун анлăнрах саралса пырать. Слесарь-инструментальщик Дмитренко, слесарь-сборщик Кононова, штамповщица Архипова, фрезеровщиксем Лобышева тата Герасимова юлташсем, Королев юлташ чěннине йышăнса, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчěç тата хăйсемпе пěр пек профессипе ěçлекенсене ăмăртăва чěнчěç. Ăмăртăва ěнтě нумай рабочисем хутшăннă.

Рабочисем пěр пек профессипе ěçлекенсен ăмăртăвне хутшăнни тата вěсен ěçěсем завод коллективě пěр туйăмпа — фронта ытларах пулăшас туйăмпа пурăннине кăтартса параççě. Е. Лобышевăпа А. Герасимова фрезеровщицăсем, ăмăртăва хутшăнса, ěç нормине 180 процент таран тултарма, инструментсемпе станоксене таса тытма, лайăх пахалăхлă продукци кăна туса кăларма, станока хăйсем тěллěнех юсама вěренме пулнă. Вěсем хăйсен сăмахне пурнăçа кěртме тытăннă ěнтě.

Пěр пек профессипе ěçлекенсен социализмла ăмăртăвě ěç тухăçлăхне малалла ÿстерме, продукци туса кăларассине çěклеме пулăшать. Партипе комсомол тата профсоюз организацийěсен, хуçалăх руководителěсен çав паха пуçарăва пур майсемпе те сарса пымалла.

Всевобучăн Етěрнери пунктěнче

Пурне те обязательнăй йěркепе çар ěçне вěрентессин тěп задачи вăл — алла пăшал тытма пултаракан кашни гражданина кирек-хăш вăхăтра та Хěрлě Çар ретне тăрса тăшмана хирěç çапăçма вěрентсе хатěрлесси, çав çапăçура кирлě пěлÿсене парасси пулать.

Всевобучăн çиччěмěш черетěнче Етěрнери пункта вěренме явăçтарнă çамрăксем çавна тěрěс ăнланса илнě. Вěренÿ пункчě малтанхи кунсенчен пуçласах ěçе тизěçлипе йěркелерě. Вěренÿ пунктěнче çар ěçне вěренме кирлě хатěрсем: автоматсем, винтовкăсем, макетсем, гранатăсемпе противогазсем, наставленисемпе уставсем çителěклě.

Командирсемпе политработниксем, хăйсене шанса панă ěçшěн государство умěнче ответлă пулса тăнине туйса, тÿрě кăмăлпа ěçлеççě, вěсем хăйсен пěтěм пултарулăхěпе пěлěвне тата опытне пулас боецсене вěрентсе хатěрлес ěçе параççě. Взводсен командирěсем Шумиловпа Петров, отделени командирěсем Кириллов, Лаптев, Титов юлташсем боецсене тÿсěмлě те çирěп, шиксěр пулма, умри чăрмавсене çěнтерме, тăшман вăйěпе техникине хирěç кěрешме, вěсене пěтерсе тăкма тимлěн вěрентеççě. Вěрентни ăнланмалларах пултăр тесе, пăхса вěренмелли хатěрсемпе анлăн усă кураççě. Подразделенинче кашни боеца уйрăмăн вěрентесси тěп вырăнта тăрать. Командирсем, уйрăм боец тунă кашни йăнăша курса, ăна çийěнчех тÿрлетме пулăшаççě.

Политработниксем вěренÿ пунктěнче политикăллă-массăллă ěçе аван йěркеленě. Подразделенинче агитаторсем, вулавçăсем ěçлеççě. Кашни икě кунта пěрре «Боевой листоксем» тухаççě. Ку ěçе «Колхозник юлташě» хаçатăн сотрудникě А. Краснов юлташ йěркелесе пырать. Кашни кунах ирхине Совет Информаци бюровěн оперативнăй сводкине радио тăрăх йышăнса боецсене каласа кăтартаççě, çав сводкăна пысăк саспаллисемпе çырса ятарласа тунă хăмасем çумне çыпăçтараççě. Докладсемпе лекцисем ирттерме ВКП(б) райкомěн парткабинечě хулари партактива явăçтарнă.

Вěренÿ пунктěнчи комсомолецсен пухăвěсем те час-часах пулаççě. Çак кěске вăхăт хушшинче вěренÿ пунктěнчи малта пыракан 28 боеца комсомол ретне илнě, 38 боец осоавиахим членне кěнě.

Çаксем пěтěмпех вěренÿ пахалăхне ÿстерме, дисциплинăна çÿллě вырăна лартма пулăшрěç. И. Менделеев, И. Шахмеев, Н. Осипов, Н. Бычков, Пирогов тата ытти чылай боецсем программăна отлично вěренсе пыраççě. Вěренÿ пунктěнчен Тăван Хěрлě Çар валли çирěп дисциплинăллă, пултарулла резерв хатěрленсе тухать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Çěнě кěнекесем

ЯЛХУÇАЛАХ КĚНЕКИСЕМ

Чăвашсен государство издательстви «Чăваш республикинчи колхозсенче выльăх апачě хатěрлес ěçе организацилесси» ятлă кěнеке пичетлесе кăларчě. Ăна Чăвашсен ялхуçалăх институчěн преподавателě К. Наумов çырнă. Автор, республикăри малта пыракан колхозсен ěçěнчи опыта пěтěçтерсе, выльăх апатне хатěрлес ěçе татах та лайăхрах организацилемелли майсене кăтартса парать.

Çывăх вăхăтрах ялхуçалăх наукисен кандидачě О. Желиговский çырнă «Ěç вăкăрěсене пăхса ÿстересси» ятлă кěнеке тата Гарчевский çырнă «Кок-сагызпа сахăр кăшманě тăвас ěçе механизацилесси» ятлă кěнекесем тухаççě.

«БУКВАРЬ» ПИЧЕТЛЕНСЕ ТУХРĚ

Çак кунсенче пуçламěш шкулсен пěрремěш класě валли «Букварь» пичетленсе тухрě. Ку ěнтě букварěн 12-мěш изданийě пулчě. Кěнекен тиражě — 50.000 экземпляр.

Çак кунсенчех чăваш шкулěсем валли вырăсла букварь пичетлесе пěтереççě.

«ТĂВАН ÇĚРШЫВА СЫХЛАНИ»

Çак ятпа Чăвашгосиздат чăвашсен ěлěкхи фольклорěн сборникне кăларнă. (Хатěрлекенě — Ф. Уяр).

Ку — питех те интереслă кěнеке. Кунта чăваш халăхě хушшинче Тăван çěршыва тěрлě тăшман-захватчиксенчен сыхласси çинчен хывнă халлапсене, сăвăсене, такмаксене пухнă. Уйрăмăнах кěнекене кÿртнě «Ют державăсем Российăна тапăнни» ятлă юмахла халлап. «1812-мěш çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем», «1914—1918-мěш çулсенчи вăрçă çинчен хывнă юрăсем» паллă пулса тăраççě. Вěсем чăваш халăхě, яланах Тăван çěршыва юратса, вырăс халăхěпе пěрле унпăн юлашки юн тумламěччен çапăçма хатěр пулнине кăтартаççě.

Кěнекен умсăмахне С. В. Элгер çырнă. Вăл кěнекене кěртнě фольклор материалěсене татах та лайăхрах ăнланса илме пулăшать.

Малта пыракан çамрăксене—комсомол ретне

Совет çамрăкěсем çěршыв умне хăрушлăх тухса тăнă кунсенче ленинла-сталинла комсомол тавра тачă пěтěçрěç. Комсомол ÿстернě нумай пин çамрăксем çапăçу хирěсенче хастарлăн кěрешсе мухтава тухрěç. Вěсем хушшинче чăваш халăхěн ывăл-хěрěсем те сахал мар. Комсомол пăхса ÿстернě Орлов, Васильев, Винокуров, Сапожников, Ефимов, Габайдуллин тата ытти юлташсем Совет Союз Геройěн ятне илме тивěçлě пулчěç. Вěсем, тăван çěршывшăн хăйсен пурнăçне шеллемесěр çапăçса, çамрăксене хăйсем пек паттăр пулма вěрентеççě.

Малта пыракан çамрăксем хăйсен пурнăçне комсомолпа çыхăнтараççě. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа пирěн республикăри 33.033 çамрăк комсомол ретне кěнě. Кăçал 6 уйăх хушшинче 5.496 çынна комсомола илнě. Комсомолăн чылай организацийěсем йыш тěлěшěнчен нумай ÿсрěç. Чурачăк районěнчи «Трактор» колхозри организацире 1942 çулта мěн пурě те 4 член кăна пулнă. ВЛКСМ организацин секретарě Алексеев юлташ хăйěн пěтěм ěçне организацие çирěплетес енěпе туса пынă. Колхоз çамрăкěсем пуханакан вырăнсенче вăл тěрлě темăсемпе калаçусем ирттернě, фронтри çамрăк геройсен паттăр ěçěсем çинчен çырнă эпизодсене вула-вула панă, партипе правительство йышăннă постановленисемпе паллаштарнă. Çапла вара пěчěк организаци майěпенех ÿссе, тěрекленсе пынă. Халě кунта 23 члена çитнě. Алексеев юлташ çамрăк комсомолецсене йěркеллě пулма тата дисциплинăна пăхăнма вěрентнě, уставпа тата программăпа паллаштарнă. Кăçал кунти 9 комсомолец ака-суха тунă, вěсемех агитаторсем пулса ěçленě. Колхозăн акма вăрлăх çителěксěр пулнă. Комсомолецсем хăйсем кăна 40 пăта яхăн вăрлăх пухнă. Ыттисене те çак ěçе явăçтарнă. Çавăн пекех силос хывас ěçе те хăвăрт туса ирттернě. Воскресниксем ирттерсе силос хывмалли плана ытлашшипех тултарнă.

Тырпулсене пухса кěме хатěрленес енěпе те комсомолецсем колхоза пысăк пулăшу панă. Ěç вăхăтěнче столовăй уçма колхозниксем хушшинче 40 пăт тырă пухнă. Комсомолец Терентий Евгеньев хăй 15 пăт панă.

Калинино районěнче кăçал 6 уйăх хушшинче комсомол йышě 900 çынна çити, Куславкка районěнче 1.240 çынна çити ÿснě. Советски ВЛКСМ райкомě те нумай çамрăка комсомол ретне илнě.

Анчах начар ěçлекен организацисене лайăх ěçлекеннисен хÿттинче пытарса хăварма çук. Пěтěмěшпе илсен, комсомола илес ěç çителěксěр пулса пырать. Уйрăмăнах комсомол йышě рабочисен шучěпе сахал ÿсет. Улатăрти паровозсем юсакан заводра ударниксемпе стахановецсем 142 çамрăк ытла шутланаççě. Апла пулин те, заводри организаци çурçул хушшинче 15 рабочие кăна хăйěн ретне явăçтарнă. Çавăн пекех комсомолăн Çěмěрле комбинатěнчи, Канашри вагонсем юсакан заводри, Шупашкар хулинчи организацийěсем те начар ÿсеççě.

Колхозсенчи пуçламěш организацисем те хăйсен ěçěсемпе мухтанма пултараймаççě. Улатăр райкомě çурçул хушшинче 72 çамрăка, Кувакино райкомě 74 çамрăка, Йěпреç райкомě — 106 çамрăка кăна комсомол ретне илнě. Ишлей, Сěнтěр, Пăрачкав, Çěмěрле тата ытти районсенче те çак ěç сÿрěккěн пулса пырать. Ку райкомсен работникěсем çак ыйтупа çине тăрса ěçлемен, пуçламěш организацисен ěçне те тěрěслесе тăман. Сăмахран, ВЛКСМ Шăхасан райкомě колхоз çамрăкěсене комсомола илес ыйтăва кăçал пěр хутчен те сÿтсе-явман. Çапла вара, кунти колхозсенчи организацисенчен 28-шě комсомол ретне пěр çамрăка та илмен. Комсомол çулěнчен иртнě членсем кунта 50—70 çынран та иртеççě.

Райкомсем çапла сÿрěккěн ěçленине пула, республикăри чылай колхозсенче комсомол организацисем халě те туман. 6 уйăх хушшинче çěнěрен пурě те 12 колхозра çеç комсомол организацисем тунă.

ВЛКСМ организацисем чылайěшě политикăллă-массăллă ěçе начар туса пыраççě. Кăна Çěрпÿ райкомěн ěçě лайăх çирěплетсе парать. Кунти МТС-ра çамрăксем нумай пулин те, организацире 21 комсомолец кăна. Член укçине вăхăтра тÿлемесçě. МТС-ри организаци кăçал январь уйăхě пуçланнăранпа та член укçине сберкассăна хывман.

Райком çак çитменлěхсене пěлет, анчах вěсене хăвăрт пěтерме тăрăшмасть. Çěрпÿре педагогика училищи, фельдшер шкулě тата вăтам шкул пур. Ку шкулсенче те комсомола илес тěлěшпе начар ěçлеççě.

Хăшпěр райкомсем комсомола илес ěçе хăйсем чăрмав кÿреççě. Çамрăксен заявленийěсене темиçе уйăх хушши пăхса тухмасăр вырттараççě, билетсене вăхăтра памаççě, устава пăсаççě.

Вăрçă вăхăтěнче комсомола ертсе пырас ěçе çěнě çынсем хутшăнчěç. Çавăнпа та вěсене ěçре пулăшса пыни кирлě. Ялти актива комсомол ěçне активлăнрах явăçтармалла, вěсене хаклама, хисеплеме пěлмелле. Хушнă ěçсене епле пурнăçласа пынине тěрěслесе пымалла. Колхозсенчи комсомол организацисен йышне ÿстерессине актив урлă туса пыма пулать. Ку тěлěшпе ВЛКСМ райкомěсен е пуçламěш организаци секретарěсен çеç мар, кашни комсомолецăн тимлěн ěçлемелле.

Çамрăксене комсомол ретне явăçтарасси — комсомолăн организациллě ěçěн чи ответлă участокě. Çак енěпе куллен ěçлесен кăна пуçламěш организацисем ÿссе çирěпленсе пырěç.

ВЛКСМ Обкомěн X-мěш пленумě, комсомола илес ěçěн итогěсем çинчен сÿтсе-явса, çитменлěхсене пěтерес тěлěшпе тивěçлě решени йышăнчě. Пленум решенине большевикла пурнăçа кěртесси — комсомол организацисен чи кирлě задачи пулса тăрать.

Л. МИХАЙЛОВ,
ВЛКСМ Обкомěн секретарě.

Турци дипломати тата экономика тěлěшпе Германипе çыхăну тытма пăрахнă

АНКАРА, августăн 2-мěшě. (ТАСС). Анкарари радио пěлтернě тăрăх, паян ирхине Турцин премьер министрě Сараджоглу Турцин национальнăй пухăвěн ларăвěнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла пěлтернě: Турци дипломати тата экономика тěлěшпе Германипе çыхăну тытма пăрахмалла тесе йышăнчě. Сараджоглу каланă тăрăх, ку ěç Турци вăрçа хутшăннине пěлтермест, мěншěн тесен Турци вăрçа хутшăнасси Германи хăйне мěнле тытнинчен килет. Анкарари радио малалла çапла пěлтернě: Турци правительстви йышăннине Турцин национальнăй пухăвě ырланă.

Турци хаçачě Германире çěнěрен „тотальнăй мобилизаци“ тунинчен тăрăхласа кулать

АНКАРА, августăн 1-мěшě. (ТАСС). Турцин «Улус» хаçачě Гитлер çěнěрен «тотальнăй мобилизаци» тунинчен тăрăхласа çырать. Хаçат хăйěн умстатьинче çапла çырать: «Гитлер çěнě мобилизаци тума тытăннă. Анчах та унччен пулса иртнě мобилизацисенче пахчана кěмелли алăксем çумěнчи решеткесене те пухса пěтернě пирки тата çар службине 16 çула кайнă пур çамрăксене те илсе пěтернě пирки, халě ěнтě Германипе вăл оккупациленě çěршывсенче вăрçă нуши валли çěнěрен мобилизацилеме мěн те пулин тупасси çинчен шутламалли те çук».

Çěнěрен тотальнăй мобилизаци туни «темиçе вунă хутчен пěтěм сěткенне пăчăртаса илнě лимона тата тепěр хут пăчăртама шутлани пулать», тесе çырать хаçатра Атай. Унтан вăл хăйěн статьине çапла каласа пěтерет: «Ку ěнтě — юлашки мобилизаци. Тěнче вăрçин татăклă çулě килсе çитрě. Союзниксен наступленийě хуллен-и е питě хăвăрт вăйланса пырě, анчах та ку наступление чарса лартма çук ěнтě».

БОЛГАРИРЕ ГИТЛЕРА ХИРĚÇЛЕ ПĂЛХАВСЕМ ПУЛСА ИРТНĚ

СТАМБУЛ, июлěн 30-мěшě. (ТАСС). Кунта çакăн пек хыпарсем илнě: Гитлера вěлерме тапăнни çинчен пěлсенех, Болгарире Гитлера хирěçле пăлхавсем пуçланса кайнă. София хулинче «суя хыпарсем» сарассине чарма тăнă икě нимěç офицерне болгарсем хěнесе тăкнă. Варна хулинче нимěçсен гарнизонěнче те пăлхавсем пуçланса кайнă. Июлěн 25-мěшěнче унта самолетсем çине лартса эсэсовецсене янă. Пěлтернě тăрăх, вěсем çитсен Варнăра пăлхава хутшăннă 17 нимěç офицерне арестлесе Германие янă. Вěсене «Гитлера вěлерме тапăннине тěрěс мар ăнлантарнă» тесе айăпласçě.

Финлянди президенчě Рюти вырăнтан тухнă

СТОКГОЛЬМ, августăн 1-мěшě. (ТАСС). Хельсинкирен илнě хыпарсем тăрăх, унта официальнăй йěркепе çапла пěлтернě: Финлянди президенчě Рюти вырăнтан тухнă. Президент пулма Маннергейм маршала лартнă. Премьер-министр Линкомиес Маннергейма президент тăвасси çинчен Финлянди сеймне резолюци тăратнă. Çав резолюци тăрăх президентăн ěçěсене чылайěшне Линкомиесăн туса пымалла пулать.

Çурçěр Францири вăрçă ěçěсем

ЛОНДОН, июлěн 31-мěшě. (ТАСС). Союзниксен экспедициллě вăйěсен верховнăй командованийěн штабě июлěн 31-мěшěнче каçхине пичетлесе кăларнă пěлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарěсем Гранвиль хулине кěнě. Авранш, Гранвиль тата Бреаль хулисем хушшинчи районра тăшман çарěсен юлашкийěсене пěтерсе пыраççě. Тесси хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре тата Перси хули районěнче тăшманăн тěреклетнě пункчěсене пěтереççě. Гаврэ хулипе кăнтăр енчен таччăнах çыпçăнса тăракан районран тăшман чаçěсене хěссе кăларнă. Çакăнпа пěр вăхăтрах Ториньи-сюр-Вирăн икě енěпе тата Комон районěнче союзниксен çарěсем малалла куçнă. Сен-Жермен-Д'экто пункчěпе Сен-Мартэн-де-Безас пунктне туртса илнě.

Союзниксен авиацийě тăшманăн чылай объекчěсем çине бомбăсем пăрахнă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 1-мěшě. (ТАСС). Союзниксен экспедициллě вăйěсен верховнăй командованийěн штабě августăн 1-мěшěнче ирхине пичетлесе кăларнă пěлтерÿре çапла каланă:

Хěвеланăç секторěнче союзниксен çарěсем Гранвиль хулине тăшманран пěтěмěшпех тасатса çитернě. Тесси-сюр-Вир хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре тăшман çаплах вăйлăн хирěç тăрать. Ториньи-сен-Мартен секторěнче союзниксен çарěсем самаях малалла куçнă. Тăшман хирěç тăракан уйрăм вырăнсене тăтăшах пěтерсе пыраççě.

Августăн 1-мěшě ыран тенě чух çěрле союзниксен авиацийě тăшманăн çулйěрěсене пыра-пыра çапнă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 1-мěшě. (ТАСС). Союзниксен экспедициллě вăйěсен верховнăй командованийěн штабě августăн 1-мěшěнче каçхине пичетлесе кăларнă пěлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарěсем хěвеланăç секторěнче çаплах малалла куçса пыраççě. Авранш хули патěнчен малалла куçса пыракан бронетанковăй чаçсем Везин çывăхěнче, Дюссей хулинчен кăнтăр-хěвелтухăçнерехре, шыв каççине туртса илнě. Çав вăхăтра ытти чаçсем Брасей пунктне туртса илнě те ку районра Сэ шывě çине тухнă.

Вильдье хулинчен кăнтăртарахра çапăçусем пыраççě, анчах Вильдье хулине хăйне илеймен-ха. Тесси хули районěнче пирěн çарсем малалла куçнă, вěсем хулана пырса кěресси пěр миля кăна юлнă.

Ториньи-сюр-Вир хулинчен кăнтăртарахра та союзниксен çарěсем хăшпěр çитěнÿсем тунă. Комон хулинчен кăнтăртарахри районра союзниксен çарěсем, Форе-Ле-Эвек пунктне тăшманран тасатнă та Сулевр шывě урлă каçса, Ле-Бени-Бокаж пунктне туртса илнě.

Çурçěртен пуçласа августăн 1-мěшěнчи кăнтăрла çитиччен çанталăк начар тăнă пирки сывлăшри çапăçусем вăйлă пулайман.

Нормандири базăсемпе усă куракан самолетсем ирхине союзниксен çарěсем куçса пымалли çулсем çинчи тăшман объекчěсене атакăланă.

Италири вăрçă ěçěсем

ЛОНДОН, августăн 1-мěшě. (ТАСС). Союзниксен Италири çарěсен штабě çапла пěлтерет: Флоренци хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехре унти çÿллě вырăна туртса илессишěн йывăр çапăçусем пыраççě. Акăлчансен 8-мěш армийěн чаçěсем хуллен, анчах çине тăрсах малалла куçса пыраççě. Фронтăн ытти участокěсенче, вăл шутра американецсен 5-мěш армийěн фронтěнче те, малтанхи пекех патрульсем кěрешнě тата тăшмана хирěç артиллери персе тăнă.

Çурçěр Италире тата çапăçусен районěнче союзниксен тактикăллă авиацийě тăшманăн çулěсем çине тата ытти вăрçă объекчěсем çине те бомбăсем пăрахнă. Югославире союзниксен самолечěсем тăшманăн мототранспорчě çине тата чугун çул объекчěсем çине бомбăсем пăрахнă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 2-мěшě. (ТАСС). Союзниксен Италири çарěсен штабě çапла пěлтерет: Флоренци хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехре çаплах йывăр çапăçусем пыраççě. Акăлчансен 8-мěш армийěнче тăракан Инди дивизийěн чаçěсем Флоренци хулинчен 12 километр кăнтăр-хěвеланăçнерехре ларакан Кастильен хулине туртса илнě. Тибр шывěн тури тăрăхěнчи улăхра нимěçсем хытă хирěç тăнă пулин те, союзниксем тěллěн-тěллěн паха çитěнÿсем тунă. Фронтăн ытти участокěсенче унччен хи пекех патрульсем кăна кěрешнě тата тăшмана хирěç артиллери персе тăнă.

Союзниксен авиацийě ěнер тăшманăн Италири тата Югославири вăрçă объекчěсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, августăн 2-мěшě. (ТАСС). Югославирен пěлтернě тăрăх, Югослави халăхне ирěке кăларассишěн кěрешекен çарăн верховнăй штабě çапла пěлтернě: Вăтам тата Çурçěр Далмацире Югославы чаçěсем хăватлă контратакăсем тунă. Цетинье шывěн тури тăрăхěнчи улăхра тăшманăн Киево ятлă тěреклетнě пунктне туртса илнě. КнИн-Грахово секторěнче нимěçсен çавăрса илнě группировкине пěтерсе пыраççě.

Вăтам Боснире Добой районěнче хаяр çапăçусем пыраççě. Кунта тăшман Теслич хули патнелле татса кěме хăтланать.

Герцеговинăра Югослави чаçěсем Требиньерен кăнтăртарахра тăшманăн колоннине аркатса тăкнă та Требиньпе Цангат хушшинчи çула туртса илнě.

Македонире Осоговска Планина секторěнче халăха ирěке кăларассишěн кěрешекен çарăн чаçěсем болгарсен икě колоннине аркатса тăкнă. Санджакра Югослави чаçěсем тăшман çарěсене Приеполье енелле хăваласа пыраççě.

Истрире тата Загорере Югослави çарěсем, тăшманпа çапăçса, малалла ăнăçлăн тапăнса пыраççě.

Славонире Югослави партизанěсем Винковци хулипе Осиек хули хушшинчи чугун çула нумай тěлте татнă. Славонире тата Сремрăра пулса çитнě тырпула хÿтěлес тěлěшпе çаплах вырăнти çапăçусем пыраççě.

АМЕРИКĂРАН ВĂРÇĂ ХАТĚРĚСЕМ ТУРТТАРНИ

ВАШИНГТОН, июлěн 31-мěшě. (ТАСС). Америка çарěнчи транспорт службин пуçлăхě Гресс генерал-майор каласа панă тăрăх, 1941 çулхи декабрьтен пуçласа 1944 çулхи июнь уйăхěччен США-ран океан леш енчи 127 порта мěнпурě 4 миллион ытла салтак тата 63 миллион тонна тěрлě япала куçарнă. США вăрçа хутшăннăранпа Америка Европăри вăрçă хирěсене 18 миллион тонна ытла çар хатěрěсем янă. Иртнě тěнче вăрçинче пěтěмпе те 8 миллион та 900 пин тонна кăна ăсатнă пулнă. Иртнě çул Америка çарě, унччен хи кирек хăш çула илсе танлаштарсан та, çар хатěрěсем икě хут ытларах куçарнă.

КĚСКЕН

● Германин Парижра тăракан оккупациллě çарěсен командующине Штюльпнагель генерала, вăл хěвелтухăç Францире çÿренě чухне, вěлерме тапăннă, йывăр амантнă.

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совет Президиумěн 1944 çулхи июлěн 26-мěшěнче йышăннă Указě тăрăх, Чăваш республикинчи Тутарлă Шурут ял Советне Чкаловски районран Первомайски района куçармалла тунă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашторга планпа финанс пайěн пуçлăхě кирлě. Ěç укçи калаçса татăлнă тăрăх.
Адрес çапла: гор. Чебоксары, Ленина 11, Чувашторг, 2-й этаж.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
августăн 2-мěшěнчен пуçласа кунсерен американецсен илемлě çěнě фильмне «СЕРЕНАДА СОЛНЕЧНОЙ ДОЛИНЫ» кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççě: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсене кассăра ирхине 10 сехетрен сутма пуçлаççě.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарěн — 4—26, парти пурнăç пайěн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайěсен 5—31, издательство конторин —0—23.
НТ 00295 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.